* * *

*Вьетнам Халăх Республики*

## ВЬЕТНАМ ГИМНĔ

Вьетнам патриочĕсен çарĕ
Утать хĕн-асаплă, çулпа,
Ура сассисем илтĕнеççĕ
Хаяррăн тусем хушшинче.
Сăрт-ту çынсене чараймарĕ,—
Каяççĕ вăрçма тăшманпа.
Тăван çăлтăрсем хĕмленеççĕ,
Çунаççĕ ялавĕ çинче.

Пыраççĕ хастарлă та паттăр
Çынсем, тăшмана çĕнтерсе,
Вĕсен çулĕ-йĕрĕ мухтавлă,
Юрри те çĕклет кăмăла:
„Эпир парăнман, парăнмастпăр,
Вилер пĕрех хут, кĕрешсе!
Тĕп пултăр юг пусмăр! Çул паллă:
Васка, патриот, малалла!

Кĕрешĕр, туссем, ывăнмасăр!
Вьетнамăн пулас телейне,
Мире, ирĕке вăрçса илĕр!

Ан пăвтăр палач çĕршыва!
Тăшманăн çарне çапса ватăр!
Пăрахăр татса сăнчăрне!
Çĕрле çутнă факел пек çĕклĕр
Юнпа хĕрелен ялава!

Хĕвел час хăпарĕ, хăюллăн
Çĕкленĕр, асап тӳснисем!
Нимле хӳмесем те чăтаймĕç,
Эпир вут-кăваррăн çитсен.
Пăшал! Малалла! Ирĕк куншăн!
Эсир тунă паттăр ĕçсем
Вăй парĕç пире, хавхалатĕç,
Бак-Сон, До-Луонг, Тай-Нгуэн!"